ЙĂВАН МУҪИ



# КОЛХОС
## ҪУЛНЕ ТУХНĂ ҪУХ

СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ
Мускав 1931 Самар

ЙӐВАН МУҪИ

# КОЛХОС ÇУЛНЕ ТУХНӐ ҪУХ

СССР-ти ХАЛӐХСЕН ТӖП ИСТАТТӖЛСТВИ
МУСКАВ 1931 САМАР

Уполн. Главлита № В — 87 Заказ № 731 Тираж 5000 экз.

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва,
Шлюзовая набережная, 10.

# КАШӐКРАН ӞАШӐК ҪУРАЛНА.

Ҫапла пуҫламалла пулаҭ пуӟ: пӗр пуйанӑн ывӑлӗ иккӗ пулнӑ, пӗри—хӑйӗнпе арӑмӗнӟен пулнӑскер, тепри—усрама илнӗскер. Тӑван ывӑлӗн хут ҫинӟи йаӟӗ Иван пулнӑ, килте ӑна Ваӈӟӑ тесе ӟӗннӗ, усрав ывӑлин хут ҫинӟи йаӟӗ те, аӟашласа ӟӗнмелли йаӟӗ те Макарах пулнӑ.

Макарӗ лаша пек ӗҫленӗ, хӗл упи пек ҫинӗ, кайӑк ыйхипе ҫывӑрнӑ. Иванӗ тутлӑ ҫинӗ, тутлӑ ҫывӑрнӑ, ӗҫлессин тути-масине пӗлмен.

Вӑхӑт виҫи малалла шуса пынӑ май, Иванпа Макарӑн ҫул хисепӗсем 17-мӗш картлашка ҫине сиксе ларнӑ. Ҫав вӑхӑталла пуйанӑн кивелнӗ арӑмӗ вилнӗ те, вӑл вӗр ҫӗнӗ арӑм туйанса, унпа пӗр ҫӑвартан сурса пурӑнма пуҫланӑ.

Ҫырла шывӗпе ҫунӑ пек питлӗ арӑмӗ илӗртсе ыйтнипе, ҫак пуйан, кайӑк ҫувӑр уйӑрнӑ вӑхӑтра, икӗ ывӑлне те уйӑрса йанӑ. Тӑван ывӑлне мунӟа илсе тухма ирӗк панӑ, пӗр пысӑк хутаҫпа ылттӑн тыттарнӑ (ҫӗнӗ арӑмӗ куриӟӟен); усрав ывӑлне мукалнӑ тимӗр кӗреҫе панӑ.

Тӑван ывӑлӗ мунӟине уй хӗрне кайса лартнӑ, сарӑ ылттӑнне мунӟа кӑмаки хыҫне ӟиксе хунӑ. Усрав ывӑлӗ кӗреҫине хулпуҫҫи ҫине ҫавӑрса хунӑ та, ҫитмӗл те ҫиӟӗ тӗрлӗ уй урлӑ, ҫитмӗл те ҫиӟӗ тӗрлӗ вӑрман урлӑ телей шырама кайнӑ.

* * *

Уйрӑлса тухса вырнаҫнӑ хыҫҫӑн:

— Нимӗнле пурлӑх туйанмастӑп. Нимӗн те тумастӑп. Укҫапа ҫимелли анђах илетӗп. Укҫа пӗтсен вилетӗп, тесе сӑмах панӑ хӑйне хӑй Йӑван.

Халӗ вӑл пӗђӗк ђӳређеллӗ мунђа умӗнђе ђеђексем ҫинђе пылхурђӗсем тутлӑ ҫимӗҫсем шыраса ҫӳренине пӑхса ларать. Хырӑмӗнђе хваттер укҫи тӳлемесӗрех пурӑнакан шӗвӗрӗлђенӗсем пастовккӑ пуҫласа пӑкӑр-пӑкӑр-р!—туса ҫӑкӑр пама ыйтаҫҫӗ.

Хырӑмӗ хырӑ тӑрнех хӑпарса кайсассӑн, пирӗн Йӑван кӳрше ђупать.

— Ҫапла, ҫапла, ҫапла,—тет,—хырӑм выҫрӗ,—тет.—Ҫӑкӑрпа сӗт парса йарӑрха,—тет.

Кӳршӗ арӑмӗ халђ ҫеҫ сунӑ сӗте йӑттарса йарать (укҫалла конешнӑ).

— Ха-ха-ха!—тесе кулса йанӑ, Йӑван ҫисе ларнӑ ҫӗре пырса тӑнӑ Курмила тусӗ,—Ха-ха-ха. Ђӗрес анинђенех ҫийетӗн тем? Ма кашӑк илместӗн, ха-ха-ха!—тенӗ.

Курмила „ха-ха-ха“ тенине илтсессӗн, Йӑвана ҫамки тирне картлантарса хунӑ та, шухӑшлама тытӑннӑ. Шухӑшласа тӑраннӑ хыҫҫӑн:

— Есӗ кулса каламастӑн пулсан... Кашӑкне... илме пулать. Хаклӑ йапалах мар вӑл,—тенӗ.

Кашӑк туйаннӑ хыҫҫӑн, каҫ пулас умӗн, пӗрре каласнӑскер, каллех сӗт илсе пырать кӳршӗ арӑмӗ Йӑвана ҫитерме.

— Мана ђӗресӗ халех кирлӗђђӗ. Ӑҫта йарса хӑварас ара сӗтне?—тет ђӗресне лартса.

Иван ӗне ҫилли шӑрши кӗрекен сӗт ҫине кушакла пӑхса:

— Кашӑк ӑшне йарса хӑвар,—тет.

— Мӗнле кашӑк ӑшне?

— Акă çак кашăк ăшне. Есĕ йарса пар та, епĕ лĕпĕрт сыпаканни пулам. Сыпса йанă хыççăн каллех йарса парăн.

— Ай-уй? Мĕнле апла?!—тенĕ ал айĕн кулса арăм,—ђашăку çуки мĕн ара апла? Қашăкпа пĕрле ђашăк та илмеллеђђĕ.

Тепĕр пасартан хĕррисене сăрланă тăм ђашăк йатса таврăнаť Иван.

— Ђашăк илтĕн тем? Халĕ ĕнтĕ хуран туйанас пулаť,—тет ђарăнма пĕлмен Курмила.

Малалла кайаť вара: хуран ваљђи вуђах тăваççĕ, вуђахне тунăскер кăмакине те тăваççĕ.

— Çынсем малтан пўрт тăваççĕ, унтан кăмака тăваççĕ. Епĕр пўртне тума маннă,—кулаť кăмакине пăхса Курмила.—Пўртсĕр кăмака вăл килĕшмест,—тет.

— Ťфу! Мĕнле кун пекех йапăх тытатăн ара пўртçуртна,—тесе вăрçса тăкнă пĕрре пырсан Курмила. —Çук, санпа капла май килмест. Аванлантарса йамалла. Аванланмасан сан нихăçан та пўрт тирпейлĕ пулас çук.

Виçĕ кун, виçĕ çĕр йалсем тăрăх хĕр шыраса çўренĕ хыççăн, Йăван мăшăрлă пулаť. Ни сарă, ни хура, вăтă йенелле сулăннă хĕр илсе йараť.

Мăшăр хăраххин кĕпе-йĕмсĕр пуçне нимĕн те пулман.

— Çытар кирлĕ пулаť пире çывăрма,—тет пĕр ирхине куçне уçнă-уçманах арăмĕ.—Қапла хытă сак çинђе пуçа ыраттараť.

— Манăн та пуç хăпарса тухнă, тет Йăванĕ те пăрçа урапи пек пуçне хыпаласа.

Çытар илеççĕ вара хайхискерсем, çытар хыççăн тўшек, тўшек ваљђи...кĕрĕк...

— Витĕнме.

Арăмĕ:

— Хĕлле пулсан кĕрĕк çийĕнђен тăхăнма тăлăп кирлĕ пулĕ, тет те, Йăван икĕ тăлăп пĕр харăсах туйанса килет.

Тăлăп тăхăнса пасара ларса кайма лаша илеççĕ.

Лаши выçăпа „тапак хутаççи шыраса çÿреме“ пуçлать. Çитерме утă илеççĕ.

Утă нумайрах тума ҫухăнсен çаранĕсене йÿнĕ хакпа тара илеççĕ.

Утă ытлашши пулма пуçласан, пĕр кĕтÿ выљăх илсе йараççĕ.

Пĕрин хыççăн тепри. Акмалли çĕр. Çĕç хыççăн патраксем тапса тухаççĕ. Патраксене çĕр ĕçĕнҫен пушă вăхăтра ĕçлеттерме... пысăк трупаллă савăт пулса ларать. Хапрăкĕ те. Ĕçрен ытлашши йулнă укçисем панккăра проҫҫăн парса выртаççĕ. Ей, карĕ вара ĕç!

Шавлать, хĕлтĕртетет, ҫăнкăртатать пурнăç, пит-куçсем кÿпшекленнĕ, хырăмĕ сарăлнă Иван тавра. Çĕнĕрен тунă пÿрт-çурҫĕсем катаранах йăлтăртатса лараççĕ. Кухнинҫе иртен пуçласа каçҫен вилккăсем, çĕçĕсем, йĕтĕрсем ташлаççĕ стрепккăсем аллинҫе.

Ăс парса пыракан Курмила тусĕ, клавный управљайушҫи йатне илтсе, питĕ мăнă шалу çисе выртать.

Çут тÿмеллĕ исправнĕксемпе пурçăн тумтирлĕ пăртапуп таврашĕсем çÿрттук айĕн ылттăн ҫассисем курăнса çÿрекен Йăванăн мамăк пек аллине йуратса пăҫăртаççĕ.

— Пирĕн пата та пыр çавăн пек хăна пулма, теççĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, Йăванăн пурнăç карапĕ нимĕнле хумран хăрамасăр пит вăйлă ишсе çÿренĕ.

— Ту-тут-тут-ту!

... Тпру! Кунта малаллине калама кăштах ҫарăнса тăрăпăр та, тапак хутаççисем кăларса, ҫĕлĕм ҫĕртсе йарăпăр.

* * *

1930-мĕш çул. Пĕр йешĕл курăксемпе пуҫахланнă тырăсем çине ăшшăн хĕвел пăхса савăннă кун, Иван ĕлĕк тахçанах ашшĕ килĕнҫен хăйпе пĕр кун, пĕр сехетре уйăрăлса тухнă усрав шăллĕне тĕл пулать.

Сăмах шĕкĕлђенет. Ăçтан килен, ăçталла, еп çапла, апла, мĕнле майпа?...

— Мĕн ђухлĕ тарçăсем пурђђĕ... Стрепккăмсем... Çĕрĕмсем... Хапрăксем пурђђĕ... Нумай, нумай пиншер тенкĕ прођђăнне илсе выртаттăмђђĕ... Револђутси пĕтĕмпех хăй валђђи çавăрса ђикрĕ. Хама та кăçал раскулађ турĕç те, тĕнђе тăрăх кăларса йађĕç,—тенĕ сухал пусса илнĕ, ырханланнă пирĕн Йăван. Макарĕ (аст̆ăватăр пулђ—Макар йатлăђђĕха вăл) кĕске сухалне уйукласа каланă:

— Çĕрсем, хапрăксем, прођђăн илесси, тарçăсемпе стрепккăсем,—пурте аларан тухса ўкрĕç, тетĕн? Апла пулсан санран епĕ телейлĕрех. Епĕ халĕ те çын шутĕнђех тăратăп: çĕрĕм те нумай, хапрăкăм та пур, прођђăн та илсе пурăнатăп, стрепккăсем те пĕрре мар...

Йăван кăна илтсен, ђĕп амăшле çĕре кукленнĕ ларнă.

— Мĕнле апла!?—теме анђах пултарнă ĕлĕк тутлă апатсем йăваласа савăннă, тарçăсемпе ăшă кăмăллăн каласма йуратман ђĕлхи.

— Мĕн мĕнли!?—тенĕ Йăван çине пăхса.—Сирĕн пеккисемпе вăрçса фронтран таврăннă хыççăнах, комуна кĕтĕм. Комунă ĕçĕсем, хамăр тăрăшнипе, сиккипех малалла çĕмĕрттерсе, ўснĕçем ўссе пыђĕç. Халĕ пирĕн (манăн тесен те йурать)... Халĕ манăн тимĕрпе хурçăран тунă тарçăмсем те пур, савăтăм та пур (комунă ăна пĕлтĕр туса пĕтерђĕ), стрепккăсем те пур (пĕрлешсе апатланмалли хамăр çуртра)...—Пурте пур. Прођђăн та илсе тăратăп... сайом опликатсисем тăрăх.

Йăванăн саралнă шăлĕсем шăтăртаттарса илнĕ... вăрттăн. Тапăп, тапăп, тапă айне кĕрех кайăп, тесе йăшăлтатса пăхнă çав вăхăтра унăн пĕр кĕтессе пухăнса ларнă пуç миммисем. Йулашкинђен вăл (пуç миммисем мар, конешнă—Йăван) каланă:

— Курмила пулăшса пыман пулсан, çав тери пурнăç пухма йăвăртарах пулĕђђĕ те... Вăл, сволăђ, пу-

лӑшса пыђӗ,—поткулађнӗк!...тесе вӑрҫса илнӗ хӑй кӗпи пек ҫывӑх тусне.

— Поткулађнӗксем сийен йенђен кулакран нумайах йулмаҫҫӗ ҫав, тенӗ хирӗҫ Макар та.

Ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн Макарӗ хӑй кайма тухнӑ ҫулӗпе хула йенелле кайнӑ, Йӑванӗ пуҫне тытса йеррипен тайкаланса виҫӗ пусӑм пуснӑ та, ђарӑнса тӑнӑ. Шӑтӑрт! тутарнӑ шӑлӗсем. Йӑшӑлл! тутарнӑ пуҫ мимисем.

— Поткулађнӗксем сывӑ пулсан, вӗсем сире нумайрах сийен кӳме пулӑшсан...кӗрешӳре кам ҫийеле тухасси... паллӑ пулӗђђӗ!... Кӑтартӑттӑмӑрђђӗ...—тенӗ ђышкисемпе йунаса.

Шӑркаланнӑ тырӑ пуђахӗсем ҫилпе пӑшӑлтатса илђӗҫ. Кайӑк, пӗђӗк кайӑк, ним сасђӳсӗр сывлӑша: ҫлеҫле-ҫи-ӗҫле-ӗҫле-ҫи!—тесе йанрантса йађӗ. Шӑрђӑксем ђӑриклетме пуҫларӗҫ, йумахӑм хӳри вӗҫнех ҫитсе тӑђӗ.

# ХĂРУШĂ КУН.

Хăйар шӳрпи нумай çинĕрен Хăйаршӳрпи Хветĕр тесе хушамат панă ăна йал çынписем. Ашшĕ унăн хăйар шӳрпи пулман, конешнă—Упрам йатлă пулнă. „Хветĕр Упрамђă“ темелле пулнă та ăна ашшĕ йађĕпе ђĕнес пулсан.

Пĕрре çав Хăйаршӳрпи Хветĕр вăрман касиă çĕртен калама çук хытă ĕшенсе таврăннă. Ĕшенмесĕр, вăрман касасси—хăнара-ĕçкĕре ларасси мар. Ывăнтарат. Ывăннăскер, иртерех пулсан та, Хветĕр канма выртнă. Канма выртсассăн, куçа хупасси çинђен шухăшланă вахăтрах, хăлтăр! тутарнă сасса илтсе картах сиксе илмелле пулнă унăн.

— Халтăр! Шан-шан!...

Хветĕр хăранипе ура çине сиксе тăнă.

— Хăлтăр-р-р-р!... Шăн-шан!... Шарт!...—тутарнă каллех пӳртре.

— Воспоти!—тесе сăхсăхса илнĕ Хветĕр.

— Ђăнкăрт!—илтĕнсе кайнă кăмака умĕнђи турђăка сасси.

Хветĕр ура çине тăнă та, кам çавăн пек аташса çӳренине шырама тытăннă.

Пӳртре никам та курăнман.

Хветĕр хăраса кайнине пĕрене шăтăкĕнђен таракансем пăхса тăнă.

— Фу ты!—тенĕ Хветĕр.

Тĕпелте ларакан сĕтел вырăнтан тапранса Хветĕр патне тăватă урисемпе утса пырса тăпăрт-тăпăрт туса илнĕ.

— А-ă-ă! Шуйттан кĕвенти!—тенĕ çын сассипе йăвăçран тунă сĕтел.—Шуйттан та мар ес, етем те мар...

Сĕтел хăйĕн арђине (сунтăхне) уçнă та, лађ сурнă Хветĕрĕн ырхан пиђĕ çине...

Хăлтăр-хăлтăр, утса пынă Хветĕр патне ухват:

— Пĕлетни ес, тенĕ вăл Хветĕре пĕр йĕппипе йунаса.—Пĕлетни есĕ, шуйттан, епĕ тутлă шăршăллă аш йашки ђӳлмекне тытса пăхманни миçе уйăх çитнине, тенĕ те, ђӳлмеке йатнă пек, Хветĕре икĕ тимĕррипе мăйĕнђен йарса илсе, çаклатса туртма тытăннă.

— Ман çийе хăйар шӳрпипе паранкăсăр пуçне нимĕн те лартмастăн,—тесе хайаррăн кăшăрнă ђарăнма пĕлмен сĕтел. Мункунтанпа аш йашки курман. Кайатăп кунтан. Колхоса куçатăп.

Тăвар суланђи суланса вăрçнă:

— Ман ăшри тăварпа тип çăкăрпа сухан таврашĕсем анђах пуçса çийетĕн. Тăварне те кăвакарнине анђах илетĕн. А-ă, хыт кукар!...

Ђăштăр! сапса йанă хăйĕн тăварне (Хветĕр йенелле) тăвар суланђи.

Хветĕр аран айакаллла пăрăннă. Пăрăнман пулсан, тӳмен тăвар муклашкисем куçĕнђенех тивмелле.

— Акă парам сана хампа!—тесе пынă турђака.

— Çатлаттарса йарсан акă çамкунтан!—Çат-çат-çат! туса тăнă Хветĕр çамки умĕнђе кашăксем.

— Пĕр ерне ĕнтĕ вĕри йашка курман.

— Ђăнкăр,—сиксе пырса ларнă тата Хветĕр умне хура хуран.—Мĕн пăхса тăратăр! Тавай ăна ĕнселесе йарар лайăхрах. „Пĕрлешӳре вăй“ теççĕ етемсем. Пурте пĕрлешĕпĕр те, таккойски парса йарар.

Пурте кĕпĕрленсе пыраççĕ Хветĕр çине. Шăри-шари, шăй-шай! Ђăнк-ђанк!... Шăлтăр-шарт!... Тӳнт!... Хăнтăрхонт!... Халт!... Ши!...

— Колхоса кĕмесĕр пире выçă вĕлерет. Шăнк-шанк!..

— Ай-уй! Хурах!—кăшкăрса йанă Хветĕр.

Пăлтăр-палтăр ўке-ўке аран тухса тарнă вара вăл пўртрен.

— Хăвалăр ăна, хăвалăр!—тенĕ сасăсем пўртрех тăрса йулнă вара.

Кусем çине шалăпă пама Хветĕр йалсовета ђупаť.

— А-а! Есиха!—тенĕ сасă илтĕннĕ Хветĕр йалсовет хапхи умне пырса тăрсан.

Хайхи кашăк-тирĕксем, тăвар суланђисем кăшкăраççĕ пуљха, тесе кайалла çаврăнса пăхнă мĕн те Хветĕр, пĕр йапала та курăнман.

— Мĕнле хăйамат ку?

— Сисетни ес—темиçе кун ĕнтĕ епĕр пăкăр - пăкăр! туса çўретпĕр?

— Ман пыршăсем калаççĕ,—туйса илнĕ Хветĕр.

— Пыршă йулташсем,—тенĕ çемçен Хветĕр.—Мĕн çитмерĕха сире. Манăн йалсовета каймалла, сирĕнпе калаçса тăма вăхăт çук.

— А-а! Пăкăр-пăкăр!.. Есĕ пирĕнпе калаçасшăн мари! Ах, ты, пăкăр-пакăр пўрократ! Ĕçлĕ вырăна кĕмесĕрех пўрократланса карăни? „Капкăна“ çаклатмалла сана.

— Ђухăн епĕ, тенĕ айăплă сасăпă Хветĕр—тыррăм пĕтсе çитрĕ. Пурђђĕ те, йулашкине кулак парăмшăн илсе кайрĕ. Каçарăр ĕнтĕ мана. Кăшкăрма пăрахăр. Кулак илсе кайман пулсан...

— А-а, сан кулакшăн пур, пирĕншĕн çук, тенĕ мăн сасăпа хырăмĕ.—Кулакран уйрăлса колхоса кĕреймен пиркийех пире асап кăтартатăн. Пăкăртаттарăр хытăрах! Кăшкăрăр. Хурах!.. Краул!.. Выçă вĕлереççĕ! Çăлăрах!

— Хурах!..

— Хурах!...

— Ах, тур хуплананскерсем! Ђарăнăр, мурсем! Акă пĕрре хырăмран панклаттарса йарсан.

— Ђарăнмастпăр!—хайаррăн кăшкăрса йанă вĕтĕ пыршăсем.—Çитĕ кун ђухлĕ тӳснипе. Револђутси пулни 14-мĕш çул—вăл халиђђен те колхоса кĕресси çинђен аса илмест. Кравул!..

Пыршăсем пĕрин çине пĕри хăпарса тăрса тата хытăрах хурахлатма тытăннă.

— Уйăрăлса кайап акă, тенĕ пуç (конешнă Хветĕр пуçĕ!..). Тăм пуç теме пуçлĕç мана çынсем кăçал çураки умĕн те есĕ колхоса кĕмесен. Сана пула тăм пуç йатне илтес пулаť. Акă, уйăрăлса кайсан, пурăн вара пуççăр. Мĕн лартăнха вара ман вырăна мăйу çине. Кăшкар лартса йарсан çынсем кулса вилĕç.

Ухмаха йертĕм пуђ тесе, Хветĕр пуђнитсана ђупнă. Йероплан пек ђупнă вăхăтрах çитес тесе.

Йур айĕнђен пĕр уйăх ĕлĕкрех тухнă калђасем хĕвел çинелле савăнса пăхнă. Çӳле, пĕлĕт патнех вĕççе хăпарнă тăрисем иккĕн харăс, тăрри тăрри... çеçеттин, çеçеттин!—тесе, илемлĕ çинçе сассисемпе Петĕр Иванĕн (Хветĕр кӳршин) контрактатси йĕркипе акнă ани çинђи йешĕл ӳссе ларнă калђана мухтаса йурланă.

Хветĕр хăй ани тĕлне çитнĕ. Калђисем çинçе сассисемпе йара панă йурра:

„Çӳлте кайăк вĕçнĕ ђух
Кам урине курни пур.
Çумкурăкпа ӳснĕ ђух
Кам калђине курни пур...“

Пáçăр Петĕр Иванĕ ани тĕлĕнђе „тăри-тăри“ тесе йурлаканка йăксем: трийер, трийер!—тесе вĕççе тăнă тӳпере.

Хветĕр хăйĕн ани çинђе ӳсекен калђасенђен сиккипе ђупса иртсе кайаť. Ытти çынсен анисем çинђи калђасем çавна кура: хи-хи-хик! тесе кулса йулаççĕ. Çапла „хи-хик“ тесех кулнă.

Хура пусса тухсан Хветĕре хирĕç хăйсен йалĕн кĕтĕвĕ пынă, Хветĕре курсан, пилĕк сурăх, пĕр сысна

тата пĕр ĕне, урса кайнă выђăх пек, ђупма тытăннă Хветĕр патнелле.

— Му-ук!.. Ме-ек. Нăрик-нăрик! Контрактатси... Ăшă вите. Лайăх ăратлă така...вăкăр... тенĕ сасăсем сывлăша çураççĕ. Хветĕр ăна курсан (ку ырра маррине сиснĕ ĕнтĕ) çĕтĕк çаннипе хура тарне шăлса илнĕ те, тавай мĕн пур вăй таран кайалла тарма. Ђупнă-ђупнă. Стоп... Хветĕрĕн çўç-пуçĕсем каллех хăмăш пек вирелле тăрса кайаççĕ. Çулпа ăна хирĕç сухапуçсем, тырă акмалли кунтăсем, йăвăç сўресем кĕмсĕртеттерсе пыраççĕ.

Хветĕр ни кайалла, ни малалла.

Выђăхсем Хветĕре çавăрса илеççĕ. Лаши катаран пит хайаррăн кĕçенсе пыраť:

— Мана кантарас теместĕн. Çынсем, колхоса куçнисем, трактăрсемпе суха тăваççĕ, нăй-най!.. Ме-ек! Нăрăх!..

Ĕни мăйракипе ăсса илнĕ Хветĕре, сурăхсем мăй çине хăпарса ларнă. Лаши нăй! туса—шарт! тапса йанă. Пĕтрĕ Хветĕр!

— Хурах!.. Хурах!..

Хурах кăшкăрма сасси тухмасť.

— Хура-а...

— Х-х-х!—тесе вăранса сиксе тăнă Хветĕр.

Шапăртаттарсах хура тар йухнă Хветĕр çамки çинђен çытар çине.

* *
*

Халĕ Хветĕр колхос ђленĕнђе тăраť. Хăйĕн колхосри йулташĕсемпе çуракине хатĕрленет. Вăл колхоса епĕ те пырса куртăм. Лайăх хăналаса йађĕç. Хветĕр мана ăсатса йађĕ. Ăсатса йанă ђухне хăй тĕлĕкĕ çинђен çырса пĕлтерме хушрĕ.

## ВИЛӖМПЕ ПАЛЛАШНӐ ЕТЕМ.

Вилес тейекен карҫӑк вилеймен, тет. Сарӑ Йеххӗм карҫӑк мар, вилес тесен вилмелле ӗнтӗ, ҫапах та тем ҫул вилес тесен те, хӑй ӗмӗре тӑршшӗнҫе пӗрре те вилсе курман. Пайан кунҫҫенех ҫӗрӗ пурӑнаҭ. Хӑшпӗр ҫухне, ҫынсем курман вӑхӑтра, ҫӗрӗскер, сухалӗсене каҫӑрткаласа та илкелет. Тата нумайрах каҫӑртмалла вӑл сухалне, анҫах унӑӊ аҫипӑҫисем ҫук пулнӑҫке, арӑмӗ те тахҫанах уйрӑлса кайса тупӑка кӗрсе выртнӑ.

Арӑмӗ кайса выртнӑ ҫӑва (масар) ҫине иртнӗ „раштав" хыҫҫӑн Йеххӗм хӑй те кайса вырҭаҫҫӗ пулӗ те, анҫах ҫӗри, сывмар пулсассӑн та, тапма пӑрахасшӑн пулманни ҫарса тӑнӑ.

Вилмех выртнӑҫҫӗ ӗнтӗ вӑл ун ҫухне. Шурӑ кӗпейӗм тӑхӑннӑҫҫӗ. Ҫуралнӑранпах ырхан пулнӑ икӗ пиҫӗ хушшинҫи сӑмсине, Хусан тутарӗсем тунӑ пысӑк пашнӗ пек, каҫӑртса выртнӑҫҫӗ.

— О-ох, вилетӗп!.. Ҫылӑхӑмсене каҫарӑр. Ӗҫпе те, сӑмахпа та, алӑ-урампа та ҫылӑха кӗтӗм пулӗ сирӗн умра, теҫҫӗ вӑл пухӑннӑ кӳршӗ ҫыннисене.

— Ху каҫар, теҫҫӗҫ хӗрарӑмсем шывланса тӑракан куҫӗсене ҫышкӑпа шӑлса.

Хӗрарӑмсем ҫеҫ пухӑннӑҫҫӗ. Арҫынӗсем хысна валҫи вӑрман касмашкӑн хатӗрленеҫҫӗҫ пурте пикенсе. Арҫынсенҫен, никам ҫукран, Упрампа Раман ҫеҫ кӗрсе курҫӗҫ вилме хатӗрленнӗ Йеххӗм вилнине пӗлме.

— Каç арăр ĕнтĕ мана... ĕмĕр тăршшĕнҍе çылăха кĕ ни сене, терĕ аран куçне уçса Йеххĕм Упрампа Рамана курсан.

— Ху каçар. Сана ĕмĕр тăршшĕнҍе хĕненĕ те пуљ, терĕ Раман, вăрçма йуратаканскер.

— Вилсен пытарма хамăр пулмарăмăрçке. Ķăштах тăхтанă пулсан... Пĕрик ернерен вăрмантан таврăнатпăр... — терĕ те Упрам, куçне хупнă Иеххĕм çине хăйусăррăн пăхса шухăша карĕ.

Шăп. Шăп пулнă пӳртре киҍем. Киҍем ан пултăр тесе, пĕрпĕр йапала çинҍен сăмах пуçарса йарасшăнҍҍĕ Раман, анҍах — „пулҍĕ", терĕç.

— Йеххĕм вилнĕ, тенĕ хыпар сарăлҍĕ вара йурпа витĕннĕ пӳртсемлĕ пĕҍĕк йала.

Хыпар хыççăн пĕҍĕккĕн пĕҍĕккĕн халăх пухăнса тулҍĕ Йеххĕмĕн тăвăр пӳртне. Ыран вăрмана кайма хатĕрленекенсем те пынă. Йĕрекенсемех çук та, анҍах вилĕм çинҍен аса илнипе пĕр шит хулăнăш пылҍăкпа хытса ларнă урай çинелле пăхса ларакансем пур. Хăшĕ тата ҍĕлĕм ҍĕртсе йарасси çинҍен шухăшласа тăраççĕ.

— Йеххĕм вилҍĕ. Çĕрне кама парăпăрха ĕнтĕ, тесе сăмах пуçласа йаҍĕ пĕри — те калас, те калас мар тенĕ пек сасăпа.

— Кама? Паллах ĕнтĕ — пулăшкома парас пулаť. Акă пурте пухăнса çитсен пуху пекки туса илĕпĕр те çĕрне ĕмĕрлĕхех пулăшкома памалла тăвăпăр, терĕ хирĕç йалти пулăшком претçетаттĕлĕ хăйĕн йанах айне шăтнă пĕр тĕпҍем сухалне ҍĕпĕтсе илме хăтланкаласа.

Çав вăхăтра ҍари! — çухăрса йаҍĕç, пĕтĕм пыршăпакартисене хускатса, тĕпел кукрине кĕрсе тăнă хĕрарăмсем. Пӳрт маҍҍи ишĕлсе анҍĕ, тесе шухăшлама та пулаť вĕсем çухăрса йанинҍен. Анҍах, çӳлелле пăхсан, пӳрт маҍҍи ишĕлсе анма шухăшлани палăрмарĕ. Хĕрăрăмсен куçĕсем сиксе тухас пек пăхаççĕ, аллисем шăна хăваланă ҍухнехи пек сулкаланаççĕ, урисем алăк патнелле ҍакса пыраççĕ.

— Мĕн? Мĕн пулнă?

Пăхаççĕ те арçынсем тĕпел кукринелле, тĕлĕннипе пĕрене пек хытса кайаççĕ. Çурта пек тӳптӳрĕ ларать Йеххĕм хăйĕн тӳшекки çинче. Вилмен пекех.

— Есĕр епĕ вилнĕшĕн хĕпĕртесе, манăн çĕрĕме пама шухăш тытрăри! Параймăр! Еп вилмен. Çывăрса кайнă анчах. Тĕлĕк курнă. Хысна вăрманне касасси çинчен... Хамах пыратăп касма. Комсомолĕссене вилетĕп, пыраймастăп, тесе каларăм та, пыратăпах, терĕ урмăшнă сасăпа вăл. Вилмен пекех калаçать.

Пĕр самантлăха шăп пулнă халăх: лахăл-лахăл-лахăл! кулса йачĕ пӳрт кисренмелле.

— Лохăл-лохăл-лохăл!..

— Хысна вăрманне касма кайасран хăтăлса йулас тесе вилниç пирĕн Йеххĕм, терĕç чарусăр чĕлхесем çавăнтах.

Йеххĕм вилес тесен те, вилейменни пуриншĕн те паллă пулчĕ вара. Анчах истори кунпах пĕтменха.

* * *

Иртнĕ уйăхра пулнă пухура Йеххĕм колхос уçас тенине хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ. Хăй чĕнеччĕ пулĕ те, анчах пуçĕ хирĕç мĕнле сăмах каламаллине вăхăтра тупса параймарĕ.

— Колхоса çырăнатăни?

Йеххĕм аллипе кăкрине тытрĕ те, пырĕпе еххĕм-еххĕм ӳсĕрчĕ те, ик урине умлă хыçлă пусса илчĕ те, танклаттара пачĕ хăйĕн йур тулса ларнă килкарти алăкĕ патнелле.

Çав кунах пирĕн Йеххĕм пиччен çăварне калама çук йăвăр чир кĕрсе кайса чĕлхесĕр туса лартнă.

— Йеххĕм пичче, калаха — мĕн пулнă ара сана? — тесе ыйтаççĕ унтан ырă чĕреллĕ кӳршĕ çыннисем.

— Пăççç! — тенĕ сас çеç тухать Йеххĕм çăварĕнчен. Урăх сас тухмасть.

— Колхоса ёнтĕ пурте кĕрсе пĕтрĕç. Кĕрессисинҫен шухăшласа пăхманимха? тесе ыйтнине хирĕç те вăл „пăç“—тесе çеç калаť.

„Пăç“ тенĕ сăмахсăр пуçне, хăш ҫух „пăш“ тенĕ сăмаха, хăш ҫухне „ш“ тенĕ сăмаха калама пултараť.

Йеххĕм „пĕç“ тенĕ сăмаха каласа çӳренĕ вăхăтра, йал халăхĕ „ҫиркĕве хупас“ тенĕ сăмаха каласа çӳреме вĕренсе карĕ. Нумайрах каланă хыççăн, „ҫиркĕве хупас“ тенĕ сăмаха хут çине ӳкерсе, хуҫĕ çине алă пусрĕç. Йеххĕме те çав пысăк ĕçрен айакра тăратса хăварасшăн мар. Ăна та ал пустарасшăн.

Ҫиркĕве хупатпăр. Хупассипе килĕшетĕни, Йеххĕм пиҫҫе?—ыйтаççĕ унтан.

Ыйтнине хирĕç „пăç“ тесе хураť. Тем тени пулаť вăл „пăç“ тени—никам та пĕлекен çук.

Ҫĕлхи ĕçлейменнипе çитмен, тата унăн хăлха па раппанĕ çурăлса кайса хăйĕн ĕçне туми пулса кайнă Инкек! Ара инкек вăл Йеххĕм патне те, ытти çынсем патне пынă пекех, ыйтса пыман. Ыйтса пыманскер, хăйпе пĕрле ытти инкексене те илсе пырса, Йеххĕм старике татах хытă ҫирлеттерсе йанă. Çынна паллайми пулса кайнă унăн куçĕсем. Пĕр кун иртнĕ, икĕ кун иртнĕ, виççĕмĕш кунне „Йеххĕм старик вилнĕ“ тенĕ хыпар йал тăрăх пĕр самантрах сапаланса карĕ.

Пухăнаççĕ йалйышсем вилнĕ çынна пытарма тесе. Тупăк тăваççĕ унта. Пупĕ пыраť вилĕ шăршине мăн сăмсипе катаранах сиснипе.

— Вилес умĕн Йеххĕм хăйне ҫан çапса пытарма хушса хăварҫĕ, тет вăл.

Те каланă, те каламан—ăна пĕлейместпĕр.

Катилă ăшне шăршлă йапала хурса, панихитă тума тытăнҫĕ. Аврампа Тавит патшана, тата ытти ҫаплâ çынсене асăнса кĕлĕ тунă хыççăн, „со çветтыми“ терĕ те, тупăкĕпе Йеххĕмне ҫиркĕве йăтса пыма хушрĕ.

Мĕнле вилнĕ çаплипех илсе карĕç—вилĕ ӳтне çуса

аппаланас темерĕç. Пупĕ те, кайас пулаť тесе, васкатрĕ те... Тăлăха кам питех пăхасшăн ĕнтĕ. Хăвăртрах кайса пытарас, çуракине хатĕрленмелле терĕç пуђ.

Йăтса кайма инçе мар—пĕр тăвата кил урлă каççан ђиркӳ карти патне пырса тăратăн. Çураки çитесси нумайах йулманнипе хавасланса хĕвел пĕçертсе пăхаť. Вăл пĕçертнине тӳсейменнипе, пӳрт тăррисем куççул тăкаççĕ. Пупĕ „çветтуй пушĕ“ йурласа пыраť, тийеђукĕ „аминсем“ калаť. „Аминсем“ каласах ђиркĕве кĕрсе карĕç. Панихитă турĕ унта пупĕ, пытару кĕлли каларĕ. „Со çветтыми уппаккуй“ тенĕ хыççăн, тупăк çивиттине хупса Йеххĕме „уппакковаť“ тусах лартрĕç. Унтан тупăк йăтакансем Йеххĕмĕн кĕл тунă ӳтне йерипен алăк патнелле йăтса утрĕç. Алăк патне çитес умĕн йăтса пыракансем сасартăк тупăка хăлтăр! пăрахса йађĕç.

Тупăкран ӳсĕрни илтĕнсе кайнăн туйăннă вĕсен çивĕђ хăлхисене.

Çавăнтах тупăк витти хăйех уçăлђĕ те, тупăкран хайхи вилнĕ Йеххĕм сиксе тухрĕ. Вилмен пекех.

— Ма хытă пăрахатăр ара? Пуçăма çурсах пăрахаттăрђђĕ, тесе ђĕрĕ çын пекех калаçма тытăнђĕ.

— Йеххĕм, ара есĕ вилмен тем?

— Вилмен çав. Ара ђиркĕве хупиђђен хамăн ӳте ђиркĕве кӳртсех панихитă тутарса йулас терĕм, тесе тăраť йал çулĕпе кайма йуратман Йеххĕм.

Йумах йуплĕ, хӳри вĕçлĕ, тени хађă пулаť. Çак епĕ каланă йумах та йуплĕ те, анђах хӳри вĕçлĕ мар. Çавăнпа та ăна хађă теме йурамасť. Ман йумахăн хӳри вĕçĕ Йеххĕме ђăн-ђăнах çутталла туртса, колхоса кĕртсе, тивĕçлĕ краштăн туса йарассинђе пулĕ тесе шухăшлаť манăн çак калава шухăшласа кăларнă пуçăм.

## ТĂРЛАЙ ВАÇКИ АВЛАНАТ̆.

Телей пысăк Тăрлай Ваçкин. Хăй вăл копператтиври меттăрпа виçсе пăхсан, меттăр çурăран ытла та пулас çук. А телейĕ унăн пысăк. Капан пек еппин, йе унтан та пысăкрах.

Тĕрĕссипе каласан, иртнĕ çулсенђе телейĕ унăн курăнмасăр выртнă... Ăслах марђђĕ вăл пирĕн ађи... пуç машшинин винттисем тухса ÿкнĕ теђђĕç усал ђĕлхесем ун çинђен. Ăçта, хăçан, мĕнле тухса укнине пĕлмеççĕ.

А телейĕ унăн çак иртнĕ уйăхранпа мăнăланса карĕ.

Телей пирки, калăпăр, пырат̆ унăн патне хĕрлĕ питлĕ, çÿхе туталлă хĕр. Пăрçа урапи пек пулса кайнă çÿçĕ ăшне пÿрнисене ђиксе йарат̆. Ђĕре патне пыракан сассипе, сăмахран, çапла каласа йăпатат̆:

— Ех, Ваçка, тет. Санăн пуçна тураса йаракан çук пулмалла. Пуçна тураканни тума санăн мана кађђа илмелле, тет.

Ваçка, конешнă, ăна хирĕç ихихик! тет.

Кулат̆, снађђăт.

Калаççан-калаççан:

— Ђĕпĕтсем мана, тет хĕрĕ йăлтăр çавра илемлĕ куçĕсене выљатса.

— Ихихик!

Хĕр хăйĕн çемçе аллине, калăпăр, Ваçкан ĕçпе хытнă алли çине хурат̆.

Ваçкашăн каççах кайнă хĕр.

Ытти хёрсем те, хёр ашшёсем те Васка патёнђен йулашки вăхăтра тухма пёлмессё. Конешнă, Васка ухмахрах пулин те, ђыса пёлет. Илетёп тет кађђа. Авланатăп, тет. Укса парассё, конешнă, ăна ашшёсем (хёр ашшёсем). Венђете кёме лайăхрах тумтир илсе хума хушассё. Хăшё аллă тенкё панă ăна. Утмăлăшпех тыттараканнисем те пулнă.

Вăл мё-ён! Калăпăр, висё сухрăмри йалта вырăс семйи пур. Сав вырăс семйинђи вырăс хёрё те Васкана кађђа тухма кăмăл тунă, тет.

— Ђупљу,—тесе калат тет Васкана.

Лешкасри Павăл арăмё, калăпăр, пынă тата пёрре ун патне.

„Кађђа пыратăп"—тенё. Ну, ђуптунă вара унтан Васкана тутинђен. Ађашланă. Васка кађђа илме пулнă сав арăма та. Арăмё пырат ёнтё. Нађарскерех мар. Сарă.

Тепёр кунне, калăпăр, мамăк пек йур сийён ура йёрё туса, кушак пек йăпшăнса леш арăмăн упăшки Павăл вут сурса тăракан Васка умне пырса тăрат. Аллисене суллантарат, конешнă.

— Есёиха сак ман арăма кађђа илес текенни?—тет.

— Е-е-епё... епёр мар. Епё хам кађђа тухасшăн,— тет хирёс Васка ним калама пёлменнипе.

Хăрамалла сав. Лешё вёт пёрре сапсанах Васкана ишёлтерсе антарма пултарат.

— Ан тун ёнтё. Арăм хăй каларё мана.

— Е-е-епё...

— Ан хăра. Кађђа илес тетён пулсан, илме пултаратăн. Илех!

— Кама?

— Мана... улталас тетён пулмалла та, анђах улталама кирлё мар. Арăма хамах кађђа паратăп. Тепёр сынна пулсан парас сук та, есё ађи лайăх та... паратăп, тесе сёнет Васкана.

Иртнĕ тунтикун истори пулђĕ. Истори пулђĕ тетĕп, илтеттĕри, иртнĕ тунтикун. Ваçка телейĕ пекех пысăк истори пулса иртрĕ вара вăл кун.

Халăх, калăпăр, пухăннă сакăса. Сухаллисем те, сухалсăррисем те. Лашасемпе. Сухаллисем конĕшнă, ватă çынсем. Ватă пулсан та патмарскерсем. Аш-пăш (какай) сахал мар çинĕ ĕнтĕ вĕсем хăйсен ĕмĕрĕнђе. Сухалсăррисем—çав патмар çынсен хĕрĕсем пулнă. Вуникĕ хĕр, пĕр арăм.

Хупнă ђиркӳн пушар ђанĕ 9 хутђен тон, тон, тон! тесе васкамасăр сывлăша кисретсе йађĕ. Анатран Тăрлай Ваçки сакăсалла хăпарни курăнђĕ.

Хĕрсен тутисем çурхи хĕвел пек йăл кулса илкелеççĕ.

— Çырăнатпăр ĕнтĕ,—терĕ хайхи Павăл арăмĕ.

Пурте ун çинелле пăхрĕç.

— Кампа çырăнатăн?

— Ваçкапа.

— Çук, ес мар, епĕ çырăнатăп,

-- Епĕ...

— Епĕ...

Ей, тапранса карĕ харкашу! Пĕрпĕрне ђышмах пуçларĕç хăшĕпĕрисем. Пуçран, конешнă, шаккаççĕ, айак пĕрђинђен те унта, çурăмран та. Хĕрсен ђуптума тивĕçлĕ тутисем пĕрпĕрне намăслантаракан сăмахсем калама тытăнђĕç. Пĕр сăмахпа каласан, пысăк харкашу.

Ваçка хăй те пырса тăђĕ. Ђисти вĕлле хурђĕсем пек сырăнса илђĕç пухăннă çынсем Ваçка тавра.

Ыйтаççĕ улталамарăн пулçке пире, теççĕ. Ваçкан, телей пулнă пирки, хирĕç каламалли сăмахĕ ђасах тупăнђĕ.

Пурне те кађђа илетĕп, пурте ман арăм пулатăр, терĕ.

Çаплах каларĕ. Вунвиççĕшне те кађђа илсе арăм тума пулђĕ.

Конешнă, çакăн хыççăн, ăна хĕнеме тытăнҍĕç. Хĕр ашшĕсем, снаҍҍăт, хĕнеççĕ. Нумайах хĕнĕмерĕç. Ваçкан телей пулнă пирки, йалта пурăнакан милитсонер пырса ҍарҍĕ. Револҍвĕрпе хăратса ҍарҍĕ. Ҍарман пулсан, нумайрах, вирлĕрех параҍҍĕç пулмалла. Тупаҍҍĕ вара Ваçка.

* * *

Вулакан мĕнле хĕрсем, мĕнле хĕр ашшĕсем çинҍен каланă ку калавра, тесе ыйтмастăн пулсассăн та, каласа парамха сана: хĕр ашшĕсем—кулаксем пулнă, хĕрĕсем, конешнă, кулак хĕрĕсем. Пурте çав кулаксем хăйсен хĕрĕсене çав патрака каҍҍа парса, пурлăхĕсене кĕрӳшĕ çине çыртарса йулашсăн пулнă. Халĕ вĕт, хăвăрах пĕлетĕр, йал талкишпех колхоса куçса пынă май кулак пурлăхĕсене туртса илсе колхоса параççĕ. Вĕсем çапла майпа пурлăхĕсене çăласшăн пулнă. Ҍейевĕт! Ăслă патракпа ĕç тухас çук, ухмахраххи те йурĕ пире, тенĕ ĕнтĕ вĕсем.

## ÇĔМĔРТ ÇЕÇКИ ÇУРĂЛСАН.

Çĕмĕрт çеçки çурăлнă, улăхсем симĕс çиттипе витĕннĕ, кайăксем ђĕвĕлтетнĕ, Мишшапа Клавти ђĕрисем йурату хавaслăхĕпе кăрт-кăрт тапса мухтав йуррисем каланă, пĕрин (Мишшан) – çуркуннехи мухтав йуррине, теприн – „Боже царя храни“.

— Пĕтĕм ђĕререн йуратaтăп сана, Клавти,—тенĕ çамрăк Мишша.—Санăн сахăртан тунă тутуна кунĕнçĕрĕн ђуптума хатĕр.

— Ех, Мишша! Ђуптăвассине кайран та ђуптăвăн. Малтан комсомолтан тух, тенĕ çамрăк пике унăн комсомол шухăшлă пуçĕнђи çӳçĕсене çемçе аллисемпе ађашласа.

— Халĕ епĕ комсомолĕс. Кăштах тăхтасан парттийе кĕрсе ђăн-ђăн комунис пулăп, оппортунис мар. Вара лишшентсă пулнă аçусене те усал-тĕсĕлтен сыхласа тăма пултарăп..

— Пысăк вырăнта ĕçлекен пулатăни, тенĕ хĕрĕн 15 çул тултарса 16 çула кайнă сасси.

— У-у! Саншăн аслă кăмиссарăн аслă помошникĕ пулма хатĕр.

— Ах, тенĕ хĕр çавракa кăвак куçĕсене ури патне йарса.—Йуратнă аттепе калаçса пăхмалла пулаť. Килĕшĕши вăл епĕ комсомол арăмĕ пулассипе?

Çамрăк Мишша хăйĕн сретђакла аллипе çамрăк пикен сашиттăђнăйла аллине ђăмăртаса илсе ђылайђ-

ҫен тытса тăҫĕ. Унтан икĕ ҫĕре пĕр пек тапса, Клавтин ашшĕне хăйсем мăшăрланасси ҫинҫен ăнлантарса пама карĕҫ.

Карĕҫ. Кĕҫĕҫ. Ҫур сехетрен алăка йерипен уҫса Мишша тухрĕ те, хапхан урам йенҫе ҫылайҫҫен сăмси шăтăкĕсене ҫавкаласа тăҫĕ. Сăмси ҫунаттисем хăйпăнса кайасран та шикленмерĕ. Телей пулман ырă кăмăллă Мишшан. Клавти ашшĕ Микулай, сăнсăр икĕ куҫне ҫавăрса хурса:

— Сана, пĕртен-пĕр хĕрĕме пама мар, каҫака та сутас ҫук, тенĕ ăна.

Ҫу пулнă, кĕр пулнă, хĕл тапранса кайнă.

— Кăҫал хĕл ăшă пулҫĕ, теççĕ колхоса кĕнĕ ҫухăнсемпе вăтамсем.

Клавтин ашшĕ Микулай Ҫтеппанҫă хĕл ăшă пулнипе килĕшместпит сивĕ пулҫĕ кăҫал хĕл, тет. Уншăн совет ҫанталăкĕ пит сивĕ пулнă кăҫал—пĕтĕм пурлăхне унăнне туртса илсе колхоса панă. Сивĕ, сивĕ, пит сивĕ совет ҫанталăкĕ кулаксемшĕн.

Сиввине пăхмасăрах темĕскер шухăш тытнă Мишша ҫĕриклетекен йур ҫийĕн йут йал хапхи витĕр кĕрсе кайаť. Сивĕпе ăшăрах вырăн тупса вындăртнă йытăсем Мишша пынине сисмерĕҫ. Пĕлĕт ҫинҫе ҫакăнса тăракан уйăх йатлă сарă хунар ҫеҫ курса йулҫĕ мĕнле Мишша йăпшăнса Микулай Ҫтеппанҫă хваттерне кĕрсе кайнине. Анҫах ҫав уйăхах Клавти ашшĕн ҫĕри Мишшана курсан кăрт-кăрт сиксе ташлама пуҫланине кураймарĕ,—Мишшана алăк патĕнҫен ҫавăтса кĕрекене кĕртсе лартнине те кураймарĕ. Хĕрӳллĕ калаҫу пыраť. Калаҫу вĕҫĕ ҫакă:

— Апла паратăн ĕнтĕ мана хăвăн сасăсăр йулнă хĕрне?

— Парас пуҫ. Анҫах ан ултала вара мана ĕсĕ. Мана колхоса кӳртме пĕтĕм вăйран тăрăш.

— Ун ҫинҫен мĕн калаҫмалли пур. Пар аллăна, Клавти! Атте пилле, ҫылăхлă комсомолĕспа хăвăн ҫылăхсăр хĕрне.

Клавтипе Мишша аллисене парса пĕрпĕрне йулташлă салам калаççĕ. Ашшĕ, сасăлама пултарайман аллипе, çамрăк ђунсене пиллет. Çамрăксен макнитланса кайнă тутисем ђăмппăлт! туса илеççĕ. Тĕттĕм тĕпсакайĕнђен çутти сиксе тухса сĕтел çине хăпарса лараӗ....

Вăхăта контрољсĕрех расхутласа пынипе, вĕсем çĕр каçнине те сисмен. Уйăх, никам раскулађђĕт тумасăрах, ликвитатсиленсе çĕр хыçне пытанса ларнă.

Ирхи шурăмпуç пионер калстăкĕ пек хĕрелсе тухнă. Тепĕр кун пуçланнă. Мишша ирех йалсовета ђупнă.

* * *

Хĕрӳллĕн калаçаӗ хĕрлĕ сăн çапнă Мишша ирех тăрса пынă йалсовет претçетаттĕлĕпе.

— Епĕ, тет, комунисăмшăн çунатăп, çавăнпа Параĕннĕккăв лишентса, йалтан кăларса йанăскере, сотсиалисăм тума хамăр йала кӳрес тетĕп.

— Унсăрăнах сотсиалисăм тăвăпăр, тенĕ йалсоветрисенђен пĕри.

— Унсăрăн тума май пулĕ те, хĕрĕсĕр тума май килмест.

— Мĕншĕн? Хĕрĕ вĕт лишшенккă хисепĕнђе тăраӗçке.

— Тупата турăшăн лишшенккă теме пултараймстпăр ăна. Ара вăл 17 çулта çеç. 17 çултисене лишшит тума йурамасӗ, мĕншĕн тесен вĕсем кађђа илме кирлĕ пулаççĕ.

— Кам илĕ лишшентсă хĕрне?

— Епĕ ăна утма пуçланăранпах сотсиалисăм строиттĕлствин 5 çуллăх планĕпе паллаштарса ӳстерсе 17 çула çитертĕм. Комунисăм çулĕпе кайма вĕрентсе пытăм.

— Ну?!

— Тутинђен ђăмппăлт! туса илес умĕн кирек хăçан та çав ђуптăвас йăлана ун умĕнђе пĕтĕмпех криттĕклесе хураттăмђђĕ. Вăл йала мĕнтен тухнине маркçисла аналĕс туса паратăпђĕ, еппин.

— Ну?!

— Ђуптунă хыççăн, епĕ сана, хĕрĕм, ђуптурăм, анђах есĕ ан ман, ђуптăвасси вăл виççĕр çул ытла Раççей халăхĕн йунне ĕмсе пурăннă улпутсенђен йулнă йăла. Ђуптуни урлă сынна тĕрлĕрен ђирђĕр йерме пултарать, çавăнпа есĕ сынна ан ђупту, мана анђах ђупту, тетĕп.

— Ну?!

— Тата лосăнкăсемпе паллаштаратăп: „сывă пултăр копператси!“—тетĕп те ђăмппăлт! ђуптуса илетĕп. Тепре ђуптунă ђухне: „çуракине халиђђен пулман хастарлăхпа иртересси сыв пултăр!“—тетĕп. Виççĕмĕшĕнђе: „кулаксене тĕп тăвасси сывă пултăр“, тетĕп. Тăваттăмĕшĕнђе: „Пĕрлешӳре вăй!..“

— Ну?!

— Ђуптăвассин клас йенне нихăçан та манман епĕ...

— Ну?!

— Хут кирлĕ мана!..

— Мĕнле хут?

— Клавтипе ашшĕне, йалтан кăларса йанăскерсене, йала каллех килме ирĕк паракан хут.

Ыйтнине туса паман йалсоветпа вăрçса тухса, килне çитиђђенех кăçатти çине пăхса пынă Мишша. Килĕнђе çĕлĕкне хывнă-хывманах лĕкĕленсе кайнă ђернилне кăларса райĕçтăвком йађĕпе, Микулай Çтеппанђђă хутне кĕрсе, икĕ листа çурăллă сайавлени ђăрлаттарса хунă.

* * *

Мишша хĕллехи сивĕ кунсенђе нумайђђен кĕтнĕ райĕçтăвком ответне пуштă леçсе парасса. Уй хапхин леш (уй) йенне тухса кунсерен темиçешер сехет тăрать вăл çула тăрăх малалла пăхса. Йӳтенĕ карђăксем хăйсен пĕркеленђĕк пиђĕсене хапха алăк хăмисем хушшине ђиксе, хĕрхенӳллĕн ыйтаççĕ.

— Мĕншĕн хуйхăллă тăратăн ара кунта, аҘам? теççĕ.

Мишшă куçĕсене айалалла йарса тĕксĕмĕн калать:

— Мĕн кирлĕ, çавăншăн тăратăп. Кайах хăвăн çулупа, асанне, нимĕнле инттереслă йапала та çук кунта!..—тет.

Ҙăнах та, ку историре ĕнтĕ малалла нимĕнле инттереслă йапала та çук. Кĕскен каласан: хуҙашшĕ умне тăма вăтанакан пулнă Мишшан комсомолтан сирпĕнсе тухмалла пулнă, Микула кулакăн колхос Ҙленĕ пулса ăна сăтăр тăвас ĕмĕҘĕ çухалса кайнă. Кунсем çур йенелле сулăннă

## КОЛХОС УЙЁНҪЕ КУН ПЕК ПУЛАС ҪУК ТА.

(ЙУМАХ)

Ёçе пуçласа йараканни Çитăр муҫин вăрăм сухаллă каҫаки пулнă. Вăрăм сухаллă каҫакан тăнĕ çук. Çавăнпа çав каҫака, хуçинҫен ыйтмасăрах, Михаља муҫин йал хĕрĕнҫи ани çине калҫа çиме кĕрсе кайнă.

— Е, е!—тенĕ Михаља муҫи Çитăр муҫин каҫаки хăйĕн калҫине çисе тăнине курсан,—Е—е, пукравра ман ҫышкăсем саннинҫен йăвăртараххине лайăх туйтартăм та, халĕ хирĕç тавăрас шухăшупа, каҫакуна ман калҫа çине йарса сăтăр тăвас терĕни? тенĕ—нимĕн те пĕлмен Çитăр старике вăрçса.

Çак сăмахсене каланă хыççăн, Михаља Муҫи Çитăр каҫакине хӳринҫен патакпа çапса, Пракух муҫи ани çине хуса йанă. Унтан киле таврăнса хăйĕн виçĕ сурăхне Çитăр муҫин анине çиме хуса тухнă.

— На, çийĕр Çитăр сухалăн калҫине! Пĕтĕмпех çисе пĕтерсессĕн те, сире пайан ҫару çук, тенĕ.

Саранҫҫа пек тапăнса илнĕ Михаља сурăхĕсем Çитăр „сухалĕн“ калҫине. Михаља хе-хе-хе! тесе кулса тăнă. Кулса тăрансан килне таврăннă.

Кăштах тăрсан, Çитăр муҫи тула тухсан, траххумлă куçĕпе уйалла пăхнă та, ани çинҫе Михаља сурăхĕсем çӳренине курнă.

— Ех, шуйттан çăпатин хăрах кантри!—тенĕ вăл кӳршĕре ларакан Михаља пӳрҫĕ йенелле йунаса.—Сурăхусене ман калҫана çитерсе самăртма шухăш тыт-

рăни! Анҫах ҫăкăр-тăвар вăл кирек хăçан та хире-хирĕç. Манăн та сурăхсем пурха!..

Хĕрлĕ ĕнипе ҫиҫĕ сурăхне васкасах хуса тухнă Ҫитăр муҫи Михаҫан кайăк-кĕшĕк пытанмалла пулнă калҫине çитерме. Калҫи лайăх. Сĕткенлĕ калҫа.

— Ҫак ана вăл шуйттан Михаҫа ани. Ҫийĕр ăна. Шăртне татнă сысна тирĕ пекех туса йарăр...—панă вăл выҫăхсене приккас.

Ҫиҫĕ сурăхĕпе хĕрлĕ ĕни, Ҫитăр муҫи пиллесе каланă сăмахĕсене илтнĕ-илменех, Михаҫа анине тапăнса илнĕ. Ҫултаlăк ҫисе курман выҫăх пек тапăннă анана калҫашăн хавасланнă сурăхсем.

— Ха-ха-ха!.. Аван кышлаççĕ... Киле кайма та йураť. Мансăрăнах ĕçне туса пĕтерĕçха!..

Тавăрăннă хайхи киле. Сурăхсем, тем пирки тата, Михаҫа анипе килĕшмесĕр, çавăнтах Ваçли муҫи ани ҫине кĕрсе кайнă.

Ваçли муҫи тени тухнă вара тулхăрса, сухалĕсене каçăртса. Хăйпе пĕрле вунвиç сурăх, пĕр ĕне, тата пĕр лаша хуса тухнă.

Тепĕр вунă минутран Ҫитăр каҫаки Хветĕр ани ҫине, Михаҫа сурăхĕсем Унттăркка ани ҫине, Ваçли сурăхĕсем Хветут ани ҫине кĕрсе кайнă.

Тапранса кайнă вара йапала! Хветĕрĕ те, Унттăрккн те, Хветуҫĕ те, ҫăкăр-тăвар хире-хирĕç тесе, пĕтĕм выҫăх-ҫĕрлĕхĕсене хуса тухса, ҫын калҫисем ҫине кăларса йанă. Ăмăрту тунă пекех.

Тата тепĕр 20—25 минутран Упрамĕ те, Хĕлĕпе те, Петĕр арăмĕ те, Ентипĕ те, Павăлĕ те, Хулсăр Каврили те, Атă Петĕрĕ те, пĕтĕм йалĕпе выҫăхĕсене ҫын анисем ҫине кăларса йанă. Мекекек!.. Му-у!.. Ме-е!.. Нăрик-нарик! Хăрт-хорт! Ихаха-ха!.. Нăй-най!.. Пе-е!.. Мăн салари мăн кĕтӳ пек... йал выҫăхĕ пĕтĕмпех уйра. Пĕрин ани ҫине тепри кăларса йанă, теприн ҫине тепри. Ара ҫăкăр-тăвар кирек хăçан та хире-хирĕç...

Пĕр кун иртнĕ, тепĕр кун иртнĕ... Çиђĕ кун иртнĕ. Уйри калђасем хура пус пек пулса ларнă.

— Килес çул выçă ларас пулаť ĕнтĕ, тесе вăрçса ларнă хресђенсем.

Çиђĕ кун иртсен саккăрăмĕш кун каçхине, çĕрле, пĕр кĕтӳ кашкăр пырса çирĕм тăвата сурăх пăвса кайнă калђа çинђен. Вара йал халăхĕ ирĕксĕрех хăйсен выљăхĕсене уйран хуса кĕртсе, картасене хупса лартнă.

Кашкăр та хăш-пĕр ђухне халăха усă кӳме пултараť. Çавăнтан вара йал çыннисем пĕрпĕринпе килĕшнĕ, урамра курсан та пĕрпĕринпе сăмах хушмасăр иртсе кайман.

— Ну, мĕнле? Санне калђасем нумай çĕмĕрнĕ-и?

— Нумай. Шакла пуç пекех туса йанă. Санне тата?

— Ман пĕр тĕлте кађака сухалĕ пысăккĕш йулнă.

— Мĕнле пурăнăпăрха ĕнтĕ килес çул?

— Темле пурăнăпăрха ĕнтĕ çав килес çул?!

— Нта! Мĕнли паллах мар çав. Колхос уйĕнђе ун пек пулас çук та...

Йураť кунта каланисем йумахра пулнă. Ара ђăн пулнă пулсассăн, мĕнле пурăннĕђђĕçха вăл йал çыннисем килес çул? А?.. Пĕлейместĕри? Епĕ те пĕлейместĕп!

---

## ПРОМФИНПЛАН.

Ентри Ентипĕ шапшурă шуралса кайнă. Топ топ-топ! пÿрте ђупса кĕђĕ те, аллинђи хаçата лашт пăрахса, икĕ аллипе пуçне йарса тытрĕ.

— Мĕн пулђĕ?—ыйтрĕ çăмах çăрма пăрахса арăмĕ.

— Пĕтрĕм,—терĕ Ентип,—пољшевик пултăм!

— Ох, мĕн пулђех апла?—ахлатаŤ арăмĕ.—Хайар ÿкрĕ пуљ...

— Хайар ÿкнипе санăн... Илтетни—пољшевик пултăм!..

— Ай, тур-тур-тур! Мĕнле апла пулса карăн?

— Пултăм çав. Ак пăх!—çĕре ÿкнĕ хаçатне илсе, хăйне кÿрентернĕ саметка тупрĕ те, çилĕллĕ, ђĕтренекен сассипе вулама тытăнђĕ:—„Ђăпта çапас ĕçĕн промфинпланне пĕтĕмпех тултарар: промфинплана тултарассишĕн тăрăшни—сотсиалисăмшăн тăрăшни пулаŤ“... Илтетни мĕн çырнине?

— Çырнă пулин.

— Ухмах есĕ! Ђăпта çапас промфинплана тултарма епĕ те пулăшрăм. Тапак, çитсă, сахăр нумайрах илес тесе, епĕ 500 ытла ђăпта çапса патăм. Çав 500 ђăпта ăçта кайаŤха?

— Тавар тултарма пуљ.

— Тавар тултарма çав—сотсиалисăм тума кайаŤ. Акă мĕнле ĕнтĕ ĕçсем—аттем ĕлĕк ђăпта хуçи пулнине манса, совета ђăпта çапса пулăшрăм, е!

Ентри Ентипĕ йăвăррăн сак çине пырса ларат̆ те, шухăша кайат̆. Лайăхрах шухăшламалла пултăр тесе, арăмне паранкă кăлармашкăн кайма хушат̆.

* * *

Сак çинђе нумай ларайман, тула тухса шухăшлас килнĕ Ентипĕн. Тулта уçă. Уçă сывлăшра пуçри шухăшсем та уçăлаççĕ.

Килкарти варринђи ватă йăмра саралнă çулçисене уйăрса çĕрелле пăрахма тытăннă. Хăма витнĕ сарай çийĕн вутă шаршанĕсем çине хĕвел ӳкнĕ.

Килкартипе утса пыраканскер Ентип сысна çине пырса тăрăннă.

— Ах, шуйттан сысни!

— Арăм!—терĕ паранкă кăларса тăракан арăмĕ патне ђупса пырса.—Есĕ вĕт сысна илтересшĕн пултăн!

— Ма? Каллех сăтăр туни мĕн?—хăраса ӳкре арăмĕ.

— Сăтăрĕ нумай. Ара, респуплĕк ашран анранă вăхăтра епĕр сысна усратпăр. Тĕлĕнмелле! Пасарти аш... Совет ашĕ ан пĕттĕр тетпĕр. Аша пасартан илсессĕн (килте тумасассăн) совет ашĕ сахалланма пултарат̆,— ун çинђен шухăшлама пĕлмен. Сысна усраса совета усă кӳретпĕр, е! Ах, тăманасем! Акă ыранах пусса пăрахам сыснине. Ай-ай-ай—мĕнле йăнăшсем тăватпăр, а?

Аптăранипе Ентип паранкă кăларма тытăнђĕ. Сысна çӳри пысăккĕш паранкăсем кашни çеçкерен 3-4-шар мăшăр сирпĕнсе тухаççĕ.

Ентип шухăша карĕ.

— Паранки нумай тухат̆ те-ха, анђах совета савăнтаратпăр кунпа. Советăн паранкă тăвас планĕ тулат̆ капла.

— Матка!—терĕ те, арăмĕ картах сикрĕ.—Матка, пăрах паранкуна кăларма. Пăрах тетĕп сана—илтетни?

— Ма?

— „Ма" тесе сурăх калат̆. Йур айнех йултăр. Комунисcем: пирĕн Совет Сойусĕнђе кăçал çавăн ђухлĕ паранкă пулђĕ, тенĕ ђухне ман паранкă çинђен ан калађђăр.

Арăмĕ, çăварне уçнăскерех, хирĕç ђĕнме хăйаймарĕ.

— Урăх кăлармăпăр. Кайах. Апату паçăрах пиçнĕ пуљ. Çийер!—терĕ Ентип сассине çемçетсе.

Ђăнах та апат çиме вăхăт çитни хĕвелтен те паллă, пўртри сехетрен те паллă. Ав, Ентип пăхаť те сехет çине, сехеђĕ тик-тик-тик!—тесе 6 сехетрен те иртсе кайнă. Тик-тик-тик...

— Сотсиалисăм пулас вăхăт патнелле пыратăни?—терĕ Ентип сехете,—промфинплан срукĕсен виçи пулас терĕни? Комунисcене йурас терĕни?..

Сехетне йарса илђĕ те, ђанкăр! тутарђĕ çĕрелле. Йăн-йăн-йăн йăнăшса илђĕç сехет çапмаллисем. Ђанкăр-ђанкăр! Ентип сехет çине хăпарса тăнă.

— Акă сана промфинплан срукĕ, акă сана тиктак!..

Арăмĕ питне саппунпа хупланă—у-у! тесе йурлаť. Урнă упăшкине ђарма хăрарĕ. Ара ăçтан ђаран вара ăна.

— Антар апатна!—хăтăрса тăкрĕ арăмне.

Кăвар çинђе лакăртатса вĕрекен йашкана антарса сĕтел çине лартсассăн, Ентип апатне сыпса пăхмасăрах:

— Тăвар йар!—тесе кăшкăрса тăкрĕ.

— Тăварĕ...

— Ан хирĕçсе тăр. Шеллетĕни мĕн совет тăварне. Йар уçипех!

Арăмĕ васкаманнине кура, Ентип тăвар сулађине илђĕ те, тўрех йашка çине ўпĕнтерђĕ.

— Пĕтĕм тăвара çисе пĕтерем! Совет тăварсăр йул тăр! Тăварсăр промфинплана пурнăçа кĕртсе пăхтăрха. Хă-хă!.. Çăкрине те... пĕтĕмпех касса тултар. Пĕтĕм совет çăкрине çисе йарам!

Çăварне çăкăр ђиксе тултарса тăварлă апата лĕпĕрт-лĕпĕрт сыпаť. Нумайах сыпаймарĕ, хăсма тытăнђĕ. Хырăмĕ тăвар йарса тултарнă апата йуратмарĕ.

— Ой, вилетĕн!.. Мĕнле сыхланмастăн... Хăвна хĕрхенместĕн пулсан, хырăмри ађама хĕрхен. Ой, ой!

— Ађа, ађа! Мён вăл ађа?—шухăша кайаť Ентип. Çитёнсен мăн çын пулаť. Сотсиалисăм тума пулăшаť. Пирён респуплёкре 5 çуллăх план вёçёнђе етем хисепё çавăн ђухлё пулмалла тенёђђё пёр хаçатра... Ман арăм хырăмёнђи ађа та çав хисепе кёрет ёнтё...

— Арăм!—терё.—Ухмах есё! Ађа тăватăн. Акă парам сана совет ваљљи ађасем туса пама!

Йарса илђё те арăмне çўçрен... ех сётёрме тытăнђё! Сётёрет те сётёрет. Пўрт ђётренсе çеç лараť.

Сётел патёнђе ларакан кушакки те хăраса ўкнё. Ку историрен хăтăлма пулмёши тесе, пёрех сикрё те вăл кăмака патнелле, анђах сикни вырăнлах пулмарё— Ентип ури айне кёрсе карё.

Ентипён çилли вара арăмё çинђен кушак çине куçса ларнă.

—А-а! Есёиха! Шăшисем тытатăн совет тыррине сыхлатăн. Утарнёк! Ак парам сана совет тыррине сыхлама!

Кушака хăвалама тытăнаť. Кушакё тараť. Ентип хыççăн. Кушак алăк патне, Ентип алăк сулли çине... кушака тытма пуçёпе алăка йар уçса йараť. Кушакё çенёке, унтан тула. Ентипё те унта. Тытађђё те пуљ усал кушака—тăпра муклашкинђен такăнђё. Каптăр-çат!тутарђё йăвăр кёлетки çёр çине.

— А-а! Çёр! Совет çёрё! Совета тырпул туса паратăн. 5 çуллăх планшăн ёçлетён. Комсомолёс пулас тетён!—пётём вăйран ђышаť çёре.

Арăмё çўçне-пуçне салатса йанăскер, кўрше ђупаť.

Кăшкăраť Ентип. Ђарăнма та пёлмест. Ђышки хăпарса тухнă.

Ђупса пыраççё те пускилсем, Ентипе ђарма тытăнаççё. Ентип ђарăнмасť. Вара, ним тума аптăраса, ђўређесёр хампара хупса питёрсе илеççё ăна.

* * *

Хусанта ухмахсен çуртёнђе лараť халё мёскён Ентип. Тивер мар ăна. Лайăх лараť вăл унта.

## КУ ПУЛНĂ 1940-МĔШ ÇУЛТА.

1910-мĕш çул. Епĕ ватă. Комунă туса панă—ватă çынсем пурăнмалли çуртра çемçе, прушинлă пукан çинђе тĕлĕрнĕ пек пулса, ним шухăшсăр, туйа çине уртăнса ларатăп. Пĕђђен. Урамра мусăк сассисем. Шурă пуçлă ађа, хам ађан ађинађи, ман ђĕрçине ларасшăн ђупса пыђĕ. Лартрăм шурă пуçлă ађана. Ађа çуртĕнђен ђупса килнĕ манпа калаçасси килнипех çав шурă пуçлă ађа. Сухалăмпа выљасшăн пулђĕ те, анђах пайан сухалăм çук манăн—ирех хырса тăкрăм електритсăллă притвăпа.

— Асатте, асатте!—тет хайхи шурă пуç, çĕнĕ кĕпен çĕнĕ çаннинђен тытса.—Асатте, пайан епĕ веђђăрта пианинă калатăп! Пырасах пулаŏ мана итлеме? Пырăни?

— Пырăп, ађам, пырăп!.. Пырса курас. Нта! Тĕлĕнмелле!.. Хаљхи саманаран мар, ĕлĕкхи саманаран тĕлĕнмелле.

— Мĕнпе тĕлĕнтерет сана ĕлĕкхи самана? Ма „нта“ тесе ларатăн?

— Нта!.. Пĕр 50 çулхине аса илсессĕн, пĕр хут анђах мар, çĕр хут ытларах та „нта“ —тесе калăн ађам! Самани çавăн пекђĕ. Влаç кăпиталиссемпе улпутсем аллинђеђђĕ. Улпутсем хресђенсене пит хĕсеђђĕç.

— Улпут тесе кама каланă?

— Улпут тесе ниме ĕçлемесĕрех тăранса пурăннă пысăк çынсене калаттăмăр, ађам!.. Çапла!.. Пит хытă

ним шеллемесĕрех тайтаса пыраҫҫĕҫ вĕсем ĕҫҫынни-сене.

— Мĕнпе? автомопилпе-и?

— Автомопилсем ҫукҫĕ ун ҫухне.

— Мĕнле ҫӳреҫҫĕҫ вара ун ҫухне ҫынсем?

— Автомопилпе те мар, йеропланпа та мар, лашапа, тата...

— Мĕн вăл лаша? Ратио вăйĕпе ҫӳрекенскери?

— Унпа мар. Унăн хăйĕн вăйĕ пурҫĕ. Выҫăхҫĕ вăл.

— Сыснаи?

— Сысна мар. Сыснана кӳлмеҫҫĕ. Лаша, тетĕп. Ҫапла йатлă выҫăх пурҫĕ. Суха тăваҫҫĕҫ унпа.

— Трактăр, еппин, вăл.

— Трактăр мар. Нта! Лашапа суха тăваҫҫĕҫ, вутă турттараҫҫĕҫ, ĕҫке кайаҫҫĕҫ.

— Ĕҫке? Ма ĕҫке каймалла пулнă? Коммунăн ҫуртĕнҫе шыв кранĕ пулмани мĕн?

— Шыв ĕҫме мар, ерех ĕҫме, сăра ĕҫме хăнана ҫӳреҫҫĕҫ.

— Мĕн вăл ерех?

— Сăмакон пекскер.

— Мĕн вăл сăмакон?

— Ерех пекскер. Килте хăваланăскер. Шăрпăк ҫутсан ҫунаҫҫĕ.

— Нехтă-и?

— Нехтă мар,.. Нехтăпа та усă курма пĕлмен епĕр ҫав ун ҫухне.

— Ма пĕлмен?

— Тĕттĕм пулнă. Ҫырма-вулама та 1921-мĕш ҫулта тин вĕрентĕм те епĕ.

— 1921-мĕш ҫулҫен виҫĕ ҫулхи аҫа анҫах пулнă-и мĕн апла есĕ?

— Каккуй виҫĕ ҫулхи аҫа! Вăрҫăра та пулса пăхнă унҫен епĕ.

— Мĕнле вăрçăра?

— Малтан Кермани вăрçинҫе, унтан...

— Кермани Фетератсин Сотсиалисăмла Совет Респуплĕкĕнҫе кампа вăрçнă вара есĕ? Унти çанталăкпа-и?

— Каккуй çанталăкпа вăрçма. Турра ĕненетпĕрҫĕ те, çанталăкпа вăрçасси çинҫен шухăшламан та ун ҫухне.

— Мĕне ĕненнĕ тетĕн?

— Турра.

— Выçварла аван йапала ĕнтĕ турăх. Турăха ĕненнĕ. Еппин сĕт комунĕ ҫленĕнҫе тăнă пуљ апла есĕр?

— Комун пулман çав ун ҫухне. Комун мар, копператтивсем те çукҫĕ, аҫам! Усламçăсем анҫахҫĕ.

— Шăратнă çусем пулмани, услам çусем анҫах пулнă?

Аҫа мана ăнланмасť.

Нта! 1940-мĕш çул. Епĕ ватă. Октăпер, Октăпер! Аслă Октăпер пурăнăç урапине сиккипех ҫуптарса çак 1940-мĕш çула калама çук хăвăрттăн илсе килсе çитерҫĕ.

— Сыв пултăр Октăпер!—тесе ватăлнă урамсем çине тăратăп та, урамра уйав йаҫĕпе вăйсем тăвакан комунарсем патне утатăп.

Нта! Ĕлĕкхине аса илсессĕн, ҫунăм çўçенет, халљхине аса илсессĕн ҫунăм савăнаť. Халĕ... халĕ 1940-мĕш çул! 1917-мĕш умĕнхи çулсем айакра!

## ТУПМАЛЛИ.

Стр.

Кашӑкран ђашӑк ҫуралнӑ . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Хӑрушӑ кун . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Вилӗмпе паллашнӑ етем . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Тӑрлай Ваҫки авланаť . . . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
Колхос уйӗнђе кун пек пулас ҫук та (йумах) . . . . . . . . . 28
Промфинплан . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Ку пулнӑ 1940-мӗш ҫулта . . . . . . . . . . . . . . . . 35

# СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви

**Илемлĕ калавсем, поемăсем, сăвăсем, кулăшсем пиђетлесе кăларнă:**

**Данилов.** Тайкара. 12 пус. 22 стр.
—„— Калавсем. 30 пус. 88 стр.
**Шупуççынни.** ЙЕРКĔН. Поемă. 1 т. 25 пус. 176 стр.
**Хусанкай.** ХУРИ. ÇИРĔМ УЛТТĂ. Иккĕшĕ те поемă. 15 пус. 32 стр.
**К. В. Иванов.** НАРСПИ. Поемă. 50 пус. 176 стр.
———— Пирĕн çул. МАПП ђăваш çексин алђманахĕ. 75 пус. 144 стр.
**Хутар.** ХУРА ТАР. сăвăсем. 30 пус. 31 стр.
**Д. Исайĕв.** ÇĔНЕЛНĔ ЙĂХ. Калавсем. 45 пус. 112 стр.
**В. Майаковский.** В. И. ЛЕНИН. Поемă. ХУÇАНКАЙ. куçарнă. 60 пус 108 стр.
**Талвир.** ЙĂНĂШ. Калав. 30 пус. 44 стр.
**Л. АГАКОВ.** Йулашки йумах. 20 пус. 40 стр.
**Н. ЛЯШКО.** Сăнђăр калавĕ. 25 пус. 72 стр.
**Ç. Шăпђăк.** КУЛĂШ КУСТĂРМИ. Фелйеттонсем.
**А. Нухрат.** Çеçенхир халлапĕ. 35 пус. 96 стр.
**Серафимович.** Тĕлĕнмелле хăват. 8 пус. 14 стр.
**Дорохов.** Полђшевик ывăлĕ. 20 пус. 39 стр.

КĔНЕКЕСЕМ ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛЛИ АТРĔССЕМ:
Москва, Центр, Никольская, 10

СЕКТОР КНИГОРАСПРОСТРАНЕНИЯ
ЦЕНТРИЗДАТА

Москва, Кузнецкий пер., 4
ЦЕНТРИЗДАТ КНИЖПОЧТА

Хакĕ 15 пус | Цена 15 коп.

х. 3.

ИВАН МУЧИ

На пути к коллективизации

На чувашском языке

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР.
Москва, центр, Никольская, 10.